**_Раиса Сарпи_**

***Асамлă тухьясен ăсти***

*Зинаида Воронована – хисеплесе*

Асамлă тухьясем тĕрлетĕн
Ахах-мерчен шăрçасенчен.
Чăвашлăх сăнлăхне чĕртетĕн,
Хăват илсе чун асĕнчен.

Ăсу асамлă, пăлхавуллă,
Эс хăв та ама çын ятти.
Шухăшлаву сулмаклă, вуллă
Йĕп вылятан йăлтти-ялтти!

Тиретĕн кĕмĕллĕ-нухратлă
Çап-çавракa тенкĕсене.
Пĕлетĕн: чăваш рат ăратлă,
Киллет тăшман тинкисене.

Паян тесен, паян çĕкленĕ
Çĕн Феникс-кайăк Чăвашъен.
Вăл кĕмĕл-нухратпа «тĕкленĕ» -
Нихçан пулман вăл йăвашьен!

Чăваш йăваш тени илемсĕр,
Чăваш патвар тени паха!
Тухья, тевет, сурпан тумсемсĕр
Эпир каймастпăр хупаха.

Хупах тесе лапа калатпăр,
Лапра туй-вăйă пухăнать.
Кунта эпир такмак калатпăр,
Кунта яш-кĕрĕм ухăнать.

Пуçа ухса, ташша çапатпăр,
Йăлтăр та ялтăр тумсемпе.
Ахальтен мар тевет çакатпăр,
Вăй виçнĕ майăн туссемпе.

Тевет, хушпу, тухья илемĕ
Пуянлăха яр кăтартать.
Турпай чăваш ялав-силемĕ
Хурахсене таçтан тартать!..

Çут асамат хĕвел тĕррийĕ
Эрешленет сан чунунта.
Алхапăлах сурпан хĕррийĕ
Тĕрĕленет сан аллунта!

Тавах, аппам, ăстаçă-маçтăр!
Тавах ăста аллусене!
Пуласлăхпа тĕррӳ «калаçтăр»,
Тӳпе вулать паллусене!